Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – pchd21.ru
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Никифор Тарасович Васянка**
**Книга: Йăлăмра = В заволжском лесу**
**Рассказ: Утравпа çурутрав**

– Атьăр, ачасем, Атăл варринчи ешĕл курăнакан çĕр тавра çаврăнса килĕр. Ялтан пирĕн пĕлĕш – шкул ачи килнĕ. Вăл Олег ятлă. Атăл леш енне те каçса курман. Уйрăмах çав шыв варринчи çĕрсене кайса курасшăн.

– Атьăр!

– Анчах мĕнле? Мĕнпе кайăпăр?

– Кимĕпе. Пирĕн урамра пурăнакан Сережа ашшĕ кӳршипе пĕрле çĕр выртмаллах пулла кайнă. Эрикпа иксĕмĕрĕн Сережăпа Тольăна ун патне леçсе хăварас пулать. Халех эпир Кивĕ Атăл таппине кимĕпе каятпăр, – терĕ Коля.

Атăл хĕрринчи сăртлăхрах вырăнта шăкăлтатса калаçакан Сережăпа Толя пырса тăчĕç. Олега хăйсемпе пĕрле илсе кайма вĕсем те хавасланса килĕшрĕç.

Ачасем çӳреме юратаççĕ. Шыв хĕррине чупса анчĕç те Кольăсен сăнчăрпа кăкарса хунă киммине пысăк каскаран вĕçертрĕç. Ăна шывалла кăштах тĕртрĕç те ун çине улттăн кĕрсе ларчĕç. Вĕсем, кĕсменĕсене майласа, Атăл леш енне çул тытрĕç. Атăлăн сулахай енчи хĕррипе аналалла ярăнса анчĕç те Кив Атăл таппине çаврăнса кĕчĕç. Унта шыв ерипен çеç юхать, кимĕпе тăвалла ишме йăвăрах мар. Серĕжăпа Тольăна пулăçсем патне антарса хăварнă хыççăн ачасем тăвалла шурĕç. Хальхи Атăла киввипе пĕрлештерекен шыв юппи тăрăх паçăр ишсе каçнă вырăна пырса тухрĕç.

– Акă,Олег, хайхи çĕр тавра çаврăнса çитрĕмĕр те. Хăвах куртăн ĕнте. Атăл варринче тип çĕр пур, йĕри тавраллах шыв.

– Куртăм, куртăм. Питĕ лайăх кăтартса патăр. Тата курасчĕ-ха…

– Унта йывăç-курăк ӳсет, колхоз ĕнисем, пăрусем, лашасем çӳреççĕ. Хурал пӳрчĕсем курăнаççĕ. Хӳшĕсем пур.

– Авă Шупашкар çыннисем çуллахи вăхăтра канма килекен вырăн. Ачасем те кунта каçаççĕ. Вĕсем хăйăр çинче выляççĕ, шыва кĕреççĕ, пулă тытаççĕ…

– Унпек хăйăрлă вырăнсем Шупашкартан анатарахра та пур, Кувшинка тĕлĕнче. Сĕнтĕрвăрринчен тăварахра та, анатарахра та ун пек çĕрсем чылай. Шупашкар çывăхĕнчи Çĕктер хăма завочĕ тĕлĕнче те отă пур. Ăна таврари çынсем çапла калаççĕ. Отă тени вырăнти сăмах. Кĕнекесем çинче пуринче те ун пек çĕрсене утрав теме йышăннă).

– Утравем вĕсем Атăл пек пысăк юхан шывсем варринче кăна мар, пĕчĕкреххисенче те пулаççĕ. Тата кӳлĕсем варринче, тинĕссемпе океансенче нумай.

– Эсĕ, Олег, пĕлетĕн ĕнтĕ: тинĕс вăл питĕ, питĕ пысăк, унăн вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.

Шкулта çутçанталăк çинчен вĕреннĕ чухне утравсемпе тинĕссем çинчен кăштах илтсе пĕлнĕ тата карттăсемпе те паллашкаланă ачасем хăйсем мĕн-мĕн пĕлнине пĕр-пĕрне çав тери интересленсе кала-кала параççĕ.

– Утравсемсĕр пусне пысăк шывсем хĕрринче тата çурутравсем пур, – тет Коля.

– Ай, курасчĕ, пĕлесчĕ. Мĕнле çĕрсем вĕсем…

Олег тата курасшăн, унăн тата ытларах пĕлес килеть.

– Юрать. Юрать, Олег. Кăтартăпăр. Куратăн акă, пĕлетĕн, тет Коля. Аллисемпе хăлаçланса кăтартса, калама тытăнать:

– Акă халĕ эпир çурутрав çинче тăратпăр. Чăнахах та çапла. Утрав евĕрлех вăл. Анчах унăн уйрăмлăхĕ те пур. Çавна халех курса пĕлĕпĕр. Ку енче акă – Атăл шывĕ, çурçĕр енче – ĕлĕкхи Атăлтан юлнă шыв таппи – затон. Хĕвелтухăç енĕпе вĕсене пĕрлештерекен шыв юппи юхса выртать. Тепĕр енче вара…

– Атьăр, кимĕпех кайса пăхăпăр. Халĕ çеç ишсе тухнă шыв юппипех тепĕр хут çула тухар.

Шкул ачисем ӳркенмеççĕ. Кимĕ Кивĕ Атăл таппи еннелле çул тытрĕ, унтан, торф поселокĕн пристанĕ патне çитерехпе, вăл тăвалла пăрăнчĕ. Сосновка ялĕ енелле ярăнса кайрĕ. Анчах та Сосновкă тĕлĕнче унăн çулĕ пĕтрĕ. Малалла иртме, Атăлалла çаврăнса тухма çук.

– Акă кунта типĕ çул пур, улăх тăрăх выртать. Ку вырăнтан инçех те мар, вăл Йăлăм вăрманне çавăрăнса кĕрет. Çав çулпа эпир Йăлăма çурантах каятпăр. Ку кĕпер урлă, Сосновкăн улăх çумĕнчи урамĕ витĕр,автомашинăсемпе çӳреççĕ, – терĕ Сережа. Коля та каламасăр чăтаймарĕ:

– Йăлăмра лăсăллă йывăç нумай – хыр, чăрăш. Вĕтĕ лăсăллă йывăç-куракксем те пур. Темĕн тĕрлĕ кăмпа та тупăнать. Уйрăмах хыр кăрăçĕпе шурă кăмпа нумай.  Хурăнай та сахал мар. Эпĕ çулленех çавăнта кăмпана çӳретĕп, – терĕ вăл, аллипе тăвалларах тĕллесе.

– Эх, манăн та кăмпана каясчĕ, – терĕ Олег.

– Пĕрре илсе кайăпăр, терĕç Серĕжăпа Коля.

Ачасем кимĕ çинчен анчĕç те Олега типĕ çул тăрăх Атăл еннелле илсе кайрĕç. Ку утрав евĕрлĕ çĕртен тăвалла, хĕвеланăçнелле, ешĕл çарансем сарăлса выртаççĕ. Çурутрав йăлăм енчи çĕрпе таччăн çыхăннă икен.

– Çурутравăн уйрăмлăхĕ çакă ĕнте, – терĕ Коля, – виçĕ енне шыв хупăрласа тăрать, пĕр енче – типĕ çĕр.

Паллах ĕнтĕ, пысăк кӳлĕсемпе тинĕссем хĕрринчи çурутравсем кун пек пĕчĕк мар. Хăш-пĕр çур-утрав çинче çĕршер пин çын та пурăнать. Ялсем нумай, пысăк хуласем… Пĕтĕм патшалăх вырнаçнă çурутрав та пур.

– Пирĕн асатте Крым çурутравĕ çинчен каласа кăтартатчĕ. Вăл унта вăрçă чухне пулнă. Эппин, Крым вăл шыв хĕрринчи паян курса çавăрăннă типĕ çĕр пек ĕнтĕ,     – тет Олег.

– Çапла, çапла, Олег. Лăпах çавăн пек çĕр вăл. Ăна икĕ енĕпе Хура тинĕс шывĕ хупăрласа тăрать. Тепĕр енче – Азов тинĕсĕ. Пĕр тĕлтен çеç вăл Украинă çĕрĕпе пĕрлешет.

Крым вăл – курорт çĕршывĕ. Унта ăшă. Чир-чĕртен сывалмалли санаторисем нумай, канмалли çуртсем…

– Ман анне унта курорта кайса килчĕ. Вăл Хура тинĕсре шыва кĕнĕ.

– Ман пичче унта пионерсем канмалли чаплă лагĕрьте пулнă. Хура тинĕс хĕрринчех, Артекра… Вĕсем те тинĕсре шыва кĕнĕ, иçĕм çырли пахчисене кайса курнă.

Артека шкулта лайăх вĕренекен пионерсене яраççĕ. Тен, эпир те, пысăкланарахпа, кайса курăпăр-ха.

– Тата, илтнĕ пулĕ, Çĕпĕрте, Инçет Хĕвелтухăçĕнче, Камчаткă ятлă çурутрав пур. Унта хăш-пĕр вырăнсенче шĕп-шĕвĕр тăрăллă çӳллĕ тусем пурри çинчен калаççĕ. Çĕр айĕнче вĕри шывсем сирпĕнсе тухаççĕ, тет, сиплĕ шывсем…

– Пулĕ, пулĕ çав. Çитсе курасчĕ… Тĕрлĕ çĕрсем пур иккен пирĕн таврара та. Çĕршывăмăр сарлака та пуян çав, – тет Олег, пуçне пăркаласа. Хăйне кимĕпе ярăнтарса çӳретнĕшĕн тата утравсемпе çур-утравсем, тинĕссем çинчен ăнлантарса панăшăн вăл хăйĕнчен аслăрах юлташĕсене чун-чĕререн тав турĕ. Юлашкинчен çапла каларĕ:

– Апла иккен. Халĕ пĕлетĕп эпĕ. Пысăк шывсем варринчи тип çĕре, ăна йĕри тавраллах шыв хупăрланса тăрать пулсан, утрав теççĕ. Çавăн пек çĕр хăш енĕпе те пулин пысăк тип çĕрпе çыхăнса тăрать пулсан, ăна çурутрав темелле.

– Çапла, Олег, çапла…

Ачасем питĕ кăмăллăн шăкăлтатса, Кивĕ Атăл таппи патнелле пăрăнчĕç. Кимĕ часах хуланалла çул тытрĕ…

Йăлăм енче хаваслă кĕвĕ шăранать:

Трам-та-та-та!
Трум-ту-ту-ту!
Харăс! Ать, два, три!
Таврана янратрĕ
Пионер юрри.

Авă çĕнкассем ĕнтĕ,
Авă хулари отряд.
Канма, уçăлмашкăн
Йăлăма утать.

Трам-та-та-та!
Трум-ту-ту-ту!
Харăс! Ать, два, три!
Йăлăма янратрĕ
Пионер юрри…
Паттăрăн сывлатпăр,
Куç-пуçсем вутла.
Итлĕр, рапортлатпăр,

Кăмпари отряд.

Ян-янах кайтăр
Пионер юрри.
Кунта Йăлăмра вăл,
Кăмпа чи ырри!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.